Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕне тытса пыракан регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсен чиккисене çирĕплетнĕ уйрăм сыхлав режимне палăртать. Регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсемпе территорийĕсене вĕсене тытса тăракансене сыхлама парассине, хурал обязательствине, паспортне тата ытти документсене çырса йĕркелессине Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕ тивĕçтерет.

çут çанталăк комплексĕсене объекчĕсем регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсем пулнине, вĕсем вырнаçнă территорисем вара регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсен территорийĕсем пулнине çут çанталăк комплексĕсемпе объекчĕсем вырнаçнă çĕр лаптăкĕсене çав лаптăксене харпăрлăхра тытакансенчен, çĕр хуçисенчен тата вĕсемпе усă кураканнисенчен тытса илсе те, тытса илмесĕр те пĕлтерме пултараççĕ.

2. Патшалăхăн регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк заказникĕсем тĕрлĕ енлĕ пулма пултараççĕ, çав шутра:

çут çанталăк комплексĕсене /çут çанталăк ландшафчĕсене/ сыхласа хăвармалли тата çĕнетмелли комплекслă /ландшафтлă/;

сайра йышши, çухалма пултаракан ӳсен-тăрансемпе чĕр чунсен тĕсĕсене, çав шутра хуçалăхпа ăслăлăх тата культура тĕлĕшĕнчен паха тĕсĕсене сыхласа хăвармалли тата çĕнетмелли биологиллĕ /ботаникăллă тата зоологиллĕ/;

çĕр айĕнчен чавса кăларакан экспонатсене сыхласа хăвармалли палеонтологиллĕ;

паха шыв объекчĕсене тата экологи тытăмĕсене сыхласа хăвармалли гидрологиллĕ /шурлăх, кӳлĕ, юхан шыв/;

чĕрĕ мар çут çанталăкăн паха объекчĕсене сыхласа хăвармалли геологиллĕ.

3. Патшалăхăн регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк заказникĕсен территорийĕнче яланхи йĕркепе е вăхăтлăх тăвакан кирек мĕнле ĕç-хĕле те, енчен те вăл патшалăхăн регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк заказникĕсене туса хумалли тĕллевсене хирĕçет е çут çанталăк комплексĕсене тата вĕсен пайĕсене сиен кӳрет пулсан, пурнăçлассине пӳлеççĕ е чарса лартаççĕ.

4. Патшалăхăн регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк заказникĕн тĕллевĕсене тата уйрăм сыхлав режимĕн уйрăмлăхĕсене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.

5. Патшалăхăн регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк заказникĕсен чиккисенче вырнаçнă çĕр лаптăкĕсене харпăрлăхра тытакансем, çĕр хуçисем тата çĕрпе усă куракансем патшалăхăн регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк заказникĕсенче çирĕплетнĕ уйрăм сыхлав режимне пăхăнма тивĕçлĕ тата ăна пăхăнса Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе палăртнă административлă, уголовлă тата ытти майпа явап тытаççĕ.»;

10/ 18 статьяна:

а/ ятне çакăн пек çырса хурас:

«18 статья. Регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсем»;

ă/ 2-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

«2. çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ сĕннĕ тăрăх Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çут çанталăк объекчĕсемпе комплексĕсем регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсем, вĕсем вырнаçнă территорисем вара регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен пулни çинчен пĕлтерет.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕне тытса пыракан регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсен чиккисене çирĕплетнĕ уйрăм сыхлав режимне палăртать. Регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсемпе территорийĕсене вĕсене тытса тăракансене сыхлама парассине, хурал обязательствине, паспортне тата ытти документсене çырса йĕркелессине Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕ тивĕçтерет.

çут çанталăк комплексĕсене объекчĕсем регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсем пулнине, вĕсем вырнаçнă территорисем вара регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсен территорийĕсем пулнине çут çанталăк комплексĕсемпе объекчĕсем вырнаçнă çĕр лаптăкĕсене çав лаптăксене харпăрлăхра тытакансенчен, çĕр хуçисенчен тата вĕсемпе усă кураканнисенчен тытса илсе те, тытса илмесĕр те пĕлтерме пултараççĕ.

Пĕтĕм патшалăх нушисем валли усă куракан çĕр лаптăкĕсене е шыв объекчĕсене тытса илмелле пулсан, çут çанталăк комплексĕсемпе объекчĕсем регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсем пулнине, вĕсем вырнаçнă территорисем вара регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсен территорийĕсем пулнине Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕсемпе пĕлтереççĕ.»;

б/ 3-мĕш пунктра тивĕçлĕ падежри «çут çанталăк памятникĕсем» сăмахсене тивĕçлĕ падежри «регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсем» сăмахсемпе уläштарас;

в/ 4-мĕш пунктра тивĕçлĕ падежри «çут çанталăк памятникĕсем» сăмахсене тивĕçлĕ падежри «регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕсем» сăмахсемпе уläштарас;

11/ 19.1 статьяра:

а/ ятне çакăн пек çырса хурас:

«19.1 статья. Регион пĕлтерĕшлĕ дендрологи паркĕсем тата ботаника сачĕсем»;

ă/ 1-мĕш пункта кăларса пăрахас;

б/ 2-мĕш пункта «дендрологи паркĕсене тата ботаника сачĕсене» сăмахсем умĕн «регион пĕлтерĕшлĕ» сăмахсем хушса хурас;

в/ 3-мĕш пункта «дендрологи паркне тата ботаника садне» сăмахсем умĕн «регион пĕлтерĕшлĕ» сăмахсем хушса хурас, çакăн пек çырса предложени хушса хурас: «Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче регион пĕлтерĕшлĕ тивĕçлĕ дендрологи паркĕ тата ботаника сачĕ çинчен калакан положение патшалăхăн ăслăлăх организацийĕсем тата патшалăхăн аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсем çирĕплетеççĕ.»;

г/ çакăн пек çырса 5-мĕш тата 6-мĕш пунктсем хушса хурас:

«5. Регион пĕлтерĕшлĕ дендрологи паркĕсен тата ботаника сачĕсен чиккисенче вырнаçнă çĕр лаптăкĕсене тата вăрман лаптăкĕсене регион пĕлтерĕшлĕ дендрологи паркĕсене тата ботаника сачĕсене тытса пыракан, Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органне пăхăнса тăракан патшалăх учреждение /сроксăр/ усă курма параççĕ.

6. Енчен те федераци саккунĕсемпе урăххине палăртман пулсан, Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн регион пĕлтерĕшлĕ дендрологи паркĕсен тата ботаника сачĕсен чиккисенче вырнаçнă çут çанталăк пуянлăхĕсене тата куçман пурлăха гражданла çаврăнăшра усă курассине чакараççĕ.»;

12/ çакăн пек çырса 19.2 статья хушса хурас:

«19.2 статья. Регион пĕлтерĕшлĕ ытти уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене /этно çут çанталăк паркĕсем, вăрман генетикин резервачĕсем, Чăваш Республикинчи халăхсен çут çанталăк еткерĕсем тата çут çанталăкăн паллă вырăнĕсем/

Регион пĕлтерĕшлĕ этно çут çанталăк паркĕсен, вăрман генетикин резервачĕсен, Чăваш Республикинчи халăхсен çут çанталăк еткерĕсен тата çут çанталăкăн паллă вырăнĕсен тĕллевĕсене, режим уйрăмлăхĕсене тата чиккисене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.»;

13/ 20 статьяна кăларса пăрахас;

14/ 6 сыпăкăн ятне çакăн пек çырса хурас:

«6 сыпăк. РЕГИОН ПĔЛТЕРĔШЛĔ УЙРĂМАХ СЫХЛАМАЛЛИ ÇУТ ÇАНТАЛĂК ТЕРРИТОРИЙĔСЕМ ТЫТСА ПЫРАССИ»;

15/ 25 статьян 3-мĕш пунктне çакăн пек çырса хурас:

«3. çак пунктăн иккĕмĕш абзацĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне, регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органне пăхăнса тăракан патшалăх учрежденийĕ тытса пырать.

Регион пĕлтерĕшлĕ дендрологи паркĕсене тата ботаника сачĕсене Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕ тата ăна пăхăнса тăракан патшалăх учрежденийĕ, çавăн пекех патшалăхăн ăслăлăх организацийĕсем тата патшалăхăн аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсем тытса пыраççĕ.»;

16/ 26 статьяна кăларса пăрахас;

17/ 28 статьяна çакăн пек çырса хурас:

«28 статья. Регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк паркĕсен территорийĕсене, патшалăхăн çут çанталăк заказникĕсене тата ытти уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене сыхласси

1. Регион пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк паркĕсен территорийĕсене, патшалăхăн çут çанталăк заказникĕсене тата ытти уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене сыхлассине Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕ Раççей Федерацийĕн нормативлă право акчĕсемне тата Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсемне пăхса хăварнă йĕркепе пурнăçлать.

2. Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене сыхлассине çав тĕллевпе ятарласа туса хунă, тивĕçлĕ полномочисем панă тытăмлă пайсем урлă пурнăçлама пултарать.»;

18/ çакăн пек çырса 28.1 статья хушса хурас:

«28.1 статья. Регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене сыхлас тата вĕсемпе усă курас ĕçри патшалăх асăрхавĕ

1. Регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене сыхлас тата вĕсемпе усă курас ĕçри патшалăх асăрхавĕн тĕллевĕ юридически сăпатсем, вĕсен ертӳсем тата должноçри ытти çынсем, уйрăм предпринимательсем, вĕсен полномочи илнĕ представителĕсем тата граждансем Раççей Федерацийĕн тĕнчери договорĕсемпе, Федерацин «Уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсем çинчен» саккунĕпе, Раççей Федерацийĕн урăх нормативлă право акчĕсемне килĕшӳллĕн ĕнĕшăнакан федерация ытти саккунĕсемне, çак Саккунпа тата Чăваш Республикин ытти саккунĕсемпе тата нормативлă право акчĕсемне килĕшӳллĕн тавралăха сыхлас енĕпе палăртнă, çаксене пырса тивекен требованисене пăсасран асăрхаттарасси, пăснине тупса палăртасси тата пăсма чарасси пулса тăрать:

уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕн режимне;

уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен чиккисенче вырнаçнă çĕр лаптăкĕсемпе, çут çанталăк пуянлăхĕсемпе тата ытти куçман пурлăх объекчĕсемпе усă курмалли уйрăм право йĕркине;

уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен сыхлав тăрăхĕсен, санитари е сăрт-ту санитари сыхлав округĕсен режимне.

2. Регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсенче уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене сыхлас тата вĕсемпе усă курас ĕçри патшалăх асăрхавне Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕ регионти патшалăх экологи асăрхавне Раççей Федерацийĕн тавралăх хутлăхне сыхласси çинчен калакан саккунĕсемпе килĕшӳллĕн пурнăçланă чухне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртнă йĕркепе пурнăçлать.»;

19/ 29 статьяра:

а/ 1-мĕш пунктра «уйрăмах сыхламалли пайăр çут çанталăк территорийĕсен дирекцийĕсемпе» сăмахсене «Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органне пăхăнса тăракан, регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене тытса пыракан патшалăх учрежденийĕпе» сăмахсемпе уläштарас;

ă/ 2-мĕш пунктра:

пĕрремĕш абзаца кăларса пăрахас;

иккĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

«Регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсенче мониторинг тĕпчевĕсем йĕркелесе ирттерме пултараççĕ.»;

20/ çакăн пек çырса 9.1 сыпăк хушса хурас:

«9.1 сыпăк. РЕГИОН ТАТА ВЫРĂН ПĔЛТЕРĔШЛĔ УЙРĂМАХ СЫХЛАМАЛЛИ ÇУТ ÇАНТАЛĂК ТЕРРИТОРИЙĔСЕН ПАТШАЛĂХ КАДАСТРНЕ ТЫТСА ПЫРАССИ

29.1 статья. Регион тата вырăн пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен патшалăх кадастрĕ

1. Регион тата вырăн пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен патшалăх кадастрĕн шутне çав территорисен статусĕ, вĕсен географи положенийĕне чиккисем, çав территорисен уйрăм сыхлав режимĕ, çут çанталăкпа усă куракансем, асăннă территорисен экологипе çут ĕç, ăслăлăх, экономика, истори тата культура тĕлĕшĕнчи пахалăхĕ çинчен пĕлтерекен сведенисем кĕреççĕ.

Регион тата вырăн пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен патшалăх кадастрне Чăваш Республикин çут çанталăкпа заповедниксен фончĕн лару-тăрăвне хак парас, асăннă территорисен сечĕн аталану малашлăхне палăртас, ерçин тата вырăн пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене сыхлас тата вĕсемпе усă курас ĕçри патшалăх асăрхавĕн тухăçлăхне ӳстерес, çавăн пекех асăннă территорисене Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне планланă чухне шута илес тĕллевсемпе тытса пыраççĕ.

2. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн регион тата вырăн пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен патшалăх кадастрне Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен органĕ Раççей Федерацийĕн Правительстви полномочи панă федерацин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ палăртнă йĕркепе тытса пырать.»;

21/ 31 статьяна çакăн пек çырса хурас:

«31 статья. Уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен режимне пăснăшăн явап тыттарасси

1. Уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен йĕркине пăсакан çынсене Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн явап тыттараççĕ.

2. Федерацин «Уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсем çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен чиккисенче çут çанталăк объекчĕсемпе комплексĕсене кӳнĕ сиене палăртнă йĕркепе çирĕплетнĕ хаксемпе тата сиен виçине шутласа палăртмалли методикăсемпе килĕшӳллĕн, вĕсем пулман чухне вара – сиене пĕтерме кайнă чăн тăкаксем тăрăх саплаштармалла.».

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, çу, 28, 24 №.

Чăваш Республикин САККУНĔ
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ÇĔР ЛАПТĂКĔСЕМ ÇИНЕ УÇĂ СЕРВИТУТСЕМ ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН» САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2014 çулхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче çĕр лаптăкĕсем çине уçă сервитутсем лартасси çинчен» 2005 çулхи утă уйăхĕн 20-мĕшĕнчи 26 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 63 №; 2007, 73 №; 2008, 75, 77 №-сем; 2011, 89 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 11 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ кӳртĕме хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

2/ 1 статьяра:

иккĕмĕш абзаца «Чăваш Республикин е вырăнти халăхăн интересĕсене тивĕçтерме кирлĕ чухне» сăмахсене «Чăваш Республикин интересĕсене тивĕçтерме кирлĕ чухне» сăмахсемпе уläштарас;

виççĕмĕш абзаца «е вырăнти халăхăн» сăмахсене кăларса пăрахас;

3/ çакăн пек çырса 1^1 статья хушса хурас:

«1^1 статья. **Çак Саккун йĕркелекен ыйтусем**

Çак Саккун Чăваш Республикин интересĕсене тивĕçтерме çĕр лаптăкĕ /çĕр лаптăкĕсем/ çине уçă сервитутсем лартмалли йĕркене Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн йĕркелесе тăрать.

çак Саккун вăйĕ патшалăх тата муниципалитет пурлăхне приватизациленĕ чухне пулакан, патшалăх тата муниципалитет пурлăхне тытса тăнипе çыхăннă хутшăнусене, çавăн пекех инженери коммуникацийĕсене хурса тухас, куçарас, çĕнĕлле йĕркелес, вĕсемпе усă курас, çавăн пекех çул-йĕр сервисĕн объекчĕсене тăвас, вĕсене юсаса çĕнетес, тĕпрен юсас, вĕсемпе усă курас, реклама конструкцийĕсене вырнаçтарас тата вĕсемпе усă курас тĕллевпе автомобиль çулĕсем валли уйăрнă тăрăхсен чиккисенче çĕр лаптăкĕсем тĕлĕшпе уçă сервитутсем лартнă чухне пулакан хутшăнусене витĕм кӳмест.»;

4/ 2 статьян 1-мĕш абзацĕнче «е вырăнти халăхăн» сăмахсене кăларса пăрахас;

5/ 3 статьяра:

1-мĕш пункта «, çав шутра пурте усă куракан шыв объекчĕне тата унăн çыран тăрăхĕпе граждансем ирĕклĕн усă курма пултармалли майсене тивĕçтерес тĕллевпе» сăмахсем хушса хурас;

10-мĕш пункт хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

6/ 4 статьяра:

1-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацĕнче «е вырăнти халăхăн» сăмахсене кăларса пăрахас;

3-мĕш пайра:

тăваттăмĕш абзаца «Полномочиллĕ орган» сăмахсем хыççăн «ыйтса çырнине регистраци тунă кунран пуçласа икĕ уйăх хушшинче» сăмахсем хушса хурас, «е вырăнти халăхăн» сăмахсене кăларса пăрахас;

вун пиллĕкмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

7/ 5 статьяра:

ятĕнче «ççă сервитут лартас ыйтупа» сăмахсене кăларса пăрахас;

1-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацĕнче «ççă сервитут лартас ыйтупа» сăмахсене кăларса пăрахас, «ăна лартма» сăмахсене «ççă сервитут лартма» сăмахсемпе уläштарас;

2-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзаца «Чăваш Республикин е вырăнти халăх интересĕсемшĕн тăрăшса, ççă сервитут лартасси çинчен» сăмахсене кăларса пăрахас;

иккĕмĕш абзаца «ççă сервитут лартас ыйтупа» сăмахсене кăларса пăрахас;

3-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзаца «итлевсене» сăмаха «общество итлевĕсене» сăмахсемпе уläштарас;

иккĕмĕш абзаца «ççă сервитут лартас ыйтупа» сăмахсене кăларса пăрахас;

4-мĕш пайăн иккĕмĕш абзацĕнче «ççă сервитут лартас ыйтупа» сăмахсене кăларса пăрахас, «ăна лартма» сăмахсене «ççă сервитут лартма» сăмахсемпе уläштарас;

8/ 6 статьяра «федераци саккунĕсемпе» сăмахсене «Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе» сăмахсемпе уläштарас;

9/ 7 статьяра «Федерацин «Куçман пурлăх правине тата унпа çыхăннă ытти ĕçсене патшалăх регистраци тăвасси çинчен» саккунĕпе» сăмахсене «Федерацин «Куçман пурлăх правине тата унпа çыхăннă ытти ĕçсене патшалăх регистраци тăвасси çинчен» 1997 çулхи утă уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 122-ФЗ №-лĕ саккунĕпе» сăмахсемпе уläштарас;

10/ 8 статьян пĕрремĕш абзацĕнче «, общество» сăмаха кăларса пăрахас, «сервитута пăрахăçлама» сăмахсене «ççă сервитута пăрахăçлама» сăмахсемпе уläштарас;

11/ 9 статьян пĕрремĕш абзацĕнче «е вырăнти халăхăн» сăмахсене кăларса пăрахас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, çу, 28, 25 №.

Чăваш Республикин САККУНĔ
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНĔСЕНЕ ПАТШАЛĂХĂН УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИЙĔСЕНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН» САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2014 çулхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене патшалăхăн уйрăм полномочийĕсене парасси çинчен» 2006 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 55 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 84, 85 №-сем; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 92 /I том/, 94 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 6, 12 №-сем/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 1 статьян 1-мĕш пайне çакăн пек çырса 11-мĕш пункт хушса хурас:

«11/ Раççей Федерацийĕ татса памалли ыйтусен шутне кĕртнĕ ыйтусемсĕр пуçне, асăрхавсăр чĕр чунсен хисепне йĕркелесе пымалли ĕçсене йĕркелес тата пурнăçлас енĕпе.

Раççей Федерацийĕ татса памалли ыйтусен шутне кĕртнĕ ыйтусемсĕр пуçне, муниципаллă районсен тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен асăрхавсăр чĕр чунсен хисепне йĕркелесе пымалли ĕçсене йĕркелес тата пурнăçлас енĕпе патшалăх полномочийĕсене пурнăçламалли йĕркене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.»;

2/ çакăн пек çырса 14^8 статья хушса хурас:

«14^8 статья. **Раççей Федерацийĕ татса памалли ыйтусен шутне кĕртнĕ ыйтусемсĕр пуçне, муниципаллă районсен тата хула округĕсен бюджечĕсене асăрхавсăр чĕр чунсен хисепне йĕркелесе пымалли

Сиплевçĕ

Финик – нумай çул пурăнакансен çимĕçĕ

Финикра кальци нумай. Вăл сахал калориллĕ, çавăнпа диетăна пăхăнакансене пылак çимĕç вырăнне ăна сĕнеççĕ. Аминойўçексен виçипе финик пан улмирен, апельсинран, бананран та ирттерет.

● Унри клетчатка вар хытсан пулăшать, усал шыçăн хăш-пĕр енĕнчен хўтĕлет. Финик пĕрмаях çини пыршăлăхра усăллă бактерисене пухăнма пулăшать.

Пыршăлăх ĕçне лайăхлатма 5 финика çур литр шыва ярса темиçе минут вĕретмелле. Шĕвекне кунне 2 хут – ирхине тата каçхине – ăшăлла ĕçмелле. Çавăн пекех кунне икĕ хут 5-шер финика ăшă шывпа сыпса çиме те пулать.

● Финик – вăй-хал çăл куçĕ, ку енĕпе вăл пур йышши улма-çырларан та ирттерет. Унра белок та нумай. Калăпăр, шăккалатпа канфет организма «пушă» калорисем çеç параççĕ, финик – питĕ усăллă çимĕç. вăл мышцăсемшĕн те лайăх.

● Финик ăс-тăн вăйĕпе ĕçлекенсемшĕн уйрăмах усăллă, мĕншĕн тесен унра глюкоза, В ушкăна кĕрекен витаминсем пур.

● Финикра А, В, С витаминсем пурри организма ерекен чирсене хирĕç тăма вăй кўрет. B_2 витамин углеводсемпе çусене тĕп тăвать, клеткăсене çĕнелме пулăшать.

● Типĕтнĕ финикра сахăр, çу нумай, çавăнпа ăна кунне 15-рен ытла çиме юрамасть. Сăмах май, 100 çул ытла пурăнакансенчен нумайăшĕ çирĕплетнĕ тăрăх – вĕсем кашни кунах темиçе финик çиеççĕ.

● Хĕвел тухăçĕнче çие юлнă тата ача ĕмĕртекен хĕрарăмсемшĕн чи лайăх апат финик шутланать. Вăл амăшĕн сĕтне ачана туллин аталанма кирлĕ витаминсемпе пуянлатать.

Кăшман гемоглобина ўстерет

1 килограмм хĕрлĕ кăшмана çуса тасатмалла, теркăпа хырмалла, вĕренĕ 3 литр шыва ямалла. Сивĕнсен сăрăхтармалла, 2 лимон сĕткенĕ тата 1 стакан пыл хушмалла. Лайăх пăтратмалла, кунне 3 хут апатчен çур сехет маларах 1-ер стакан ĕçмелле. Шĕвеке сивĕтмĕшре упрамалла. Вăй хушăнать, пуç çаврăнни иртет, гемоглобин йĕркене кĕрет.

Инсульт хыççăн пулăшать

Çур стакан йўç кăшмана, 2-3 штук чĕпĕтекен хĕрлĕ пăрăça вĕтĕ турамалла, çур литр спирта /шурă эрехе е тройной одеколона/ ямалла. 7 кун иртсен çак шĕвекпе мăя, ĕнсене, чавсана, чĕр куççине, пилĕке, ура тупанне сăтăрма юрать. Вăл инсульт хыççăн, миозит, остеохондроз чухне пулăшать. Ирхине тата кăнтăрла, çавăн пекех мунча хыççăн сăтăрăнма юрать.

Тĕп вырăнта – тĕрĕс апатлану

Çўç сайралма пуçласан пылпа усă курмалла – вăл ăна çирĕплетет, ўсме пулăшать. Вĕретсе сивĕтнĕ шыва пыл ямалла: 1 литра – 2 апат кашăкĕ. Çак шĕвекпе пуç тирне сăтăрма та, çўçе чўхеме те юрать.

● Пуç кукшаланма пуçласан петрушка вăрлăхĕ лайăх. Ăна çăнăх пек пуличчен авăртмалла та пуç ўтне сăтăрмалла.

● Пуçлă сухан сĕткенĕпе пуç ўтне сăтăрмалла. Ун хыççăн çўçе лайăх çумалла, шур чечек шĕвекĕпе чўхемелле. Сухан сĕткенне коньякпа тата хупах тымарĕн шĕвекĕпе хутăштарма юрать. 4 пай сухан сĕткенĕ, 6 пай хупах шĕвекĕ, 1 пай коньяк илмелле.

● Тулă пĕрчисене темиçе хут та çумалла, чашăк çине 2 хутлатнă марля вырнаçтармалла, тулла хумалла. Тырă шўмелĕх шыв ямалла. Шывне кунне 2-3 хут улăштармалла, 3-4 кунран тулă пĕрчисем шăтаççĕ. Ешĕл çимĕçе кашни кунах çимелле, салата хушсан лайăх.

● Кукшаланнипе кĕрешме тĕрĕс апатлану пулăшать. Ăшаланă, пăрăçлă апат-çимĕçрен пăрăнмалла, рациона чĕрĕ тата пĕçернĕ пахча çимĕç, пулă, аш, пăтă, ўсен-тăран çăвĕ тата услам çу, петрушка, хĕрлĕ кăшман, хурăн çырли, спаржа кĕртмелле. Çăмарта хуппине /çăнăх пек пуличчен вĕтĕтсе пăтă таврашне хушса/ çимелле. Пулă çăвĕпе йĕтĕн çăвĕ çинчен манмалла мар.

● Çўç вăйлă тăкăнсан 2 эрне кунне 2 хут çўç ўтне мулкач курăкĕн /тысячелистник/ сĕткенĕпе сăтăрмалла.

Эмел вырăнне – лавр çулçи

Лавр çулçин шĕвекĕпе шăмă сыпписене тасатма пулать: 30-35 çулça вĕтетмелле, 300 мл ăшă шыва ямалла, вĕреме кĕриччен çулăм çинче тытмалла, 5 минут вĕретмелле. Çак шĕвеке термоса ямалла, 5-6 сехетрен сăрăхтармалла. Яра куна çур сехетрен çур сехете /12 сехетре/ сыпкăмăн-сыпкăмăн ĕçсе ямалла. Çапла 3 кун сипленсе 1 эрне тăхтав тумалла, ун хыççăн каллех сипленмелле.

Лавр çулçин шĕвекне ĕçнĕ вăхăтра пахча çимĕç ытларах çимелле. 2-3 эрнеренех сывлăх лайăх енне улшăннине асăрхама пулать. Утма çăмăлланать, чĕр куççи шакăртатма пăрахать, картлашка тăрăх çăмăллăнах хăпарма пуçлатăр. Малтанхи çулхине сыпăсене 3 уйăхра пĕр хут тасатмалла, малалла çулталăкне пĕр хут. Аллерги пуласран сипленме пуçличчен пыршăлăха тасатмалла.

Асăрхаттарни: вар-хырăм тата вун ик пумăклă пыршă язвипе чирлекенсен сыпăсене лавр çулçипе тасатма юрамасть.

● Стоматит чухне, шăл туни шыççан çăвара кунне 2 хут лавр çулçин шĕвекĕпе чўхемелле.

● Ревматизм аталансан лавр çулçипе услам çу маçĕ пулăшать. 1 пай вĕтетнĕ çулça 2 пай услам çупа хутăштармалла, шыв мунчинче çур сехет тытмалла. Сивĕнсен ыратакан вырăнсене сăтăрмалла.

Тĕнче тавра

Çĕнĕ хыпарсем

● Бельги ăсчахĕсем çакнашкал пĕтĕмлетў патне пырса тухнă: час-часах табак туртакансем çулсем иртнĕçемĕн япăхрах илтме пуçлаççĕ.

● Британи ăсчахĕсем сĕт шăлсене лайăх тасатнине çирĕплетнĕ.

● Швецири тухтăрсем палăртнă тăрăх – шăккалат инфаркт пулнă çынсемшĕн усăллă. Эрнере 2 хут е ытларах та шăккалат çиекенсен чĕре чирĕсемпе вилес хăрушлăх 3 хут чакать.

Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.

Çуллахи сезон

Спортсменсемшĕн хĕрў тапхăр пуçланчĕ

Çĕртме уйăхĕ яланах хĕрў ăмăртусен тапхăрĕ пулнă. Кăçал та çаплах пулĕ. Чи пысăк та пĕлтерĕшли – футболистсен тĕнчери XX чемпионачĕ. Ăмăрту Бразилире çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче пуçланать. Чемпионата хутшăнма тивĕçнĕ 32 команда малтан ушкăнсенче вылять, финала тухассишĕн кĕрешет. Раççей футболисчĕсем Корея, Бельги, Алжир спортсменĕсемпе ăмăртаççĕ.

Раççейпе республика шайĕнче те вун-вун ăмăрту пулĕ. Çитес кĕçнерни кунпа эрне кун Кўкеçри стадиона ялти спортсменсен республикăри çуллахи вăйăисен ялавĕ вĕлкĕшĕ. Районсенчен пухăнакан спорт тусĕсем чи пултаруллисен ятне çĕнсе илессишĕн кĕрешме хатĕр. Вĕсем волейбол, армспорт, теннис, çăмăл атлетика, кĕрешў, полиатлон турнирĕсенче, кире пуканĕ йăтас, вĕрен туртас тата ытти енĕпе вăй виçĕç. Малтанлăха палăртнă тăрăх – унта тĕрлĕ район-хуларан 100 ытла спортсмен хутшăнĕ.

Çак эрнерех Шупашкарта спорт мелĕпе утакансен çĕршыв чемпионачĕ иртĕ. Кунашкал ăмăртусене пирĕн патра ытти çул та сахал мар йĕркеленĕ. Çулталăк каярах залив хĕрринчи трасса çинче чемпион ятне Мордва спортсменĕ Андрей Рузавин, Самар обласĕнчен килнĕ Юрий Андронов, Челябинскри Лина Бикулова çĕнсе илнĕччĕ. Пирĕн ентешсем Петр Трофимов, Александр Яргунькин, Светлана Васильева малти вырăнсене йышăннăччĕ. Халь-хинче еплерех çитĕнўсемпе савăнтарĕç чăваш атлечĕсем? Çўлерех асăннă утакансемсĕр пуçне старта тухма Вера Соколова, Марина Пандакова, Эдик Хайбуллин, Андрей Архипов, Кирилл Фролов, Ксения Михайлова тата ытти хăш-пĕр çамрăк спортсмен хатĕрленет. Расписанипе килĕшўллĕн залив хĕрринче кăнтăрла хĕрарăмсемпе арçынсем 20 километра утса тупăшăç, каç кўлĕм «Олимпийский» стадиона çамрăксем ăмăртĕç. Чемпион парнишĕн тата Европăри ăмăртăва хутшăнассишĕн арçынсен 50 километрлă дистанцире çăмăл мар экзамен тытма тивĕ.

Спорт мелĕпе утакансен сезонĕ ака уйăхĕнчех пуçланнă. Çак тапхăрта республика спортсменĕсем темиçе турнирта та вăй виçме ĕлкĕрчĕç. Етĕрне районĕнчи Советскинче Европа тата тĕнче чемпионкин Алина Ивановăн парнисене çĕнсе илессишĕн пысăк ăмăрту иртрĕ, унта Чăваш Енри чи пултаруллă 120 çамрăк атлет тăватă виçере тупăшнă. Чи сумлă парнесене Канаш районĕнчи Дмитрий Тимофеевпа Валерия Архипова, Элĕк тăрăхĕнчи Денис Ивановпа Анна Степанова, Муркашри Роман Куликовпа Александра Вострейкина тата ытти çĕнсе илнĕ. Пĕр тăван тренерсен Василий, Геннадий, Виктор Семеновсен тăван ялĕнче – Элĕк районĕнчи Мăн Вылă – иртнĕ ăмăртăва 162 çамрăк хутшăннă. Республикăри паллă çынсен парнисен ытларах пайне Элĕк спортсменĕсем тивĕçнĕ, Муркашпа Канаш каччисемпе хĕрĕсем те маттур пулнă.

Раççейĕн спорт календарĕнче çавăн пекех çăмăл атлетсен нумай енлĕ кĕрешĕвĕ, юниорсен чемпионачĕ пур. Шупашкар ку ăмăртусене хăнăхнă ĕнтĕ. Пенсионерсен Раççейри спартакиадинче вара пурсăмăр та халĕччен пулса курманччĕ-ха. Пĕрремĕш ăмăрту çĕртме уйăхĕн 10-12-мĕшĕнче иртĕ. Хулари «Спартакпа» «Олимпийский» стадионсенче тивĕçлĕ канăва тухнă спортсменсем теннисла тата волейболла выляса, бассейнра ишсе, тĕл персе, шахмат сĕтелĕ хушшине ларса, кĕске дистанцисене чупса хăйсен хастарлăхне кăтартĕç.

Кăшт маларах Шупашкарта çăмăл атлетсен Атăлçи округĕн чемпионачĕ иртрĕ. Стадиона курма пынисене Чăваш Республикин командинчи Евгения Смирнова йĕтре тĕртекенсен, Алина Прокопьева 5000 метра чупакансен тупăшăвĕнче, Марина Сизова 100 метрлă дистанцире çĕнтерсе савăнтарчĕç.

■ **Юрий ПЛОТНИКОВ**

Ял пурнăçĕ

Колхоз ачисем

30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкар районĕнчи Шоркка ялĕнче «Победа» колхоз йĕркеленĕ. Трифон Афанасьевпа Федор Ильин унăн малтанхи председателĕсем пулнă. Чăпта çапмалли промэртел ĕçленĕ. 1926 çулта 104 килти хуçалăхра 216 арçынпа 231 хĕрарăм пурăннă.

Пĕрлехи хуçалăхсем никĕсленĕ çулсенче демографи политикине тĕрĕс çулпа тытса пынă. Кашни çемьере 5-10 ача пăхса çитĕнтернĕ. Хăш-пĕр çемьере вĕтĕршакăра пăхакан пулман. Ял канашĕ ашшĕамăшне колхозра тулли ĕç кунĕпе вăй хума май тунă: В.Алексеев килĕнче ача сачĕ уçнă. Халĕ унăн вырăнĕнче лартнă пўртре Васильевсем пурăнаççĕ. Валери асламăшĕ шăпăрлансене кунне виçĕ хутчен апат пĕçерсе çитернĕ. Пĕчĕккисене пăхма Лапсар ялĕнчен Татьяна килнĕ.

Колхозăн ХТЗ тракторĕпе суха тунă. Ача садĕнче пĕçернĕ апата Шорккара Санькка Мамутина, Сарапакассинчи Хветура Андреева механизаторсене тата плугарьсене çитернĕ.

Каярахпа ача сачĕ А.Павловăн килне /халĕ кунта – Г.Гаврилова çемйи/ куçнă. Шкул çулне çитменнисене çирĕплетнĕ йĕркепе килĕшўллĕн вăйăсем выляттарнă, юрлама-ташлама вĕрентнĕ. Кăнтăрла вăхăтĕнче çывăрма вырттарнă. Çырма, вулама вĕрентмен.

Тепрехинче килте ача сачĕ уçма И.Афанасьев килĕшнĕ. Халĕ унăн хĕр ачи Ульха аппа лартнă çуртра тĕпкĕчре – А.Солин. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăн ача сачĕ нумай çуллăха хупăннă. 1988 çулта юнашар ялта, Çатракассинче, ача сачĕн икĕ хутлă çуртне хута ячĕç. Халĕ унта 96-ăн çўреççĕ.

■ **Владислав ПЛАТОНОВ**

Халсăрсене пулăшаççĕ

Ялта пĕри те тепри ĕçке ернине лавккара эрех-сăра часах сутăнса пĕтнинчен те лайăх пĕлетпĕр. Хакĕ хытах çыртать пулин те пĕрмай унта чупаççĕ.

Йўççине ĕçсе супнăшăн пĕрисем совет саманине айăплаççĕ. Чăн та, çутти иртнĕ ĕмĕрте чăваш пурнăçне çирĕп кĕрсе вырнаçрĕ. Ăна сыпнă хыççăн аташакан пайтахчĕ. Анчах партипе правительство тăмана шўрпине тутансанах общество вырăнĕнче сĕмпĕлтетсе çўрекенсене, йĕркене пăсакансене явап тыттарма тăрăшнă: е пайăр ĕçне парткомра, халăх судĕнче, пухура сўтсе явнă, е пуçлăх ятланă, премисĕр хăварнă, е стена хаçатĕнче вирлĕн питлесе пите хĕретнĕ.

Реформăсен тапхăрĕнче правительство хура такапа кĕрешесси çинчен йышăну кăларнине ас тумастăп. Республика Пуçлăхĕ нарăс уйăхĕнчи тĕл пулăвĕсенче саккуна пăсса спирт хутăшĕ тата суя эрех сутнине сивлесе хытă каларĕ. Анчах унăн сăмахне ял, район шайĕнче питех юплемеççĕ.

Эрех кĕленчи ăшне путнисемпе кĕрешесси вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен пĕр ĕçĕ пулмалла пек туйăнать. Анчах ку муниципалитетсен тивĕçĕ мар-ши? Эпир, совет тапхăрĕнче ĕçлесе пиçĕхнĕ ветерансем, çакна ниепле те ăнланмастпăр. Вун сакăр çул тултарман ачасем эрех-сăра лĕрккенине пăхса тĕлĕнетпĕр. Вĕсене кура мăнукăмсем те сентре çинчи пулăштух патне алă тăсма пултараççĕ-çке.

Патшалăх тата муниципалитет органĕсен алкоголизмпа чирлисене пулăшас, сиплес тĕлĕшпе малашне те ĕçлемелле. Пирĕн ялта пĕри темиçе çул ĕçсе этем ретĕнчен тухрĕ. Ăна вилĕмрен çăлассишĕн тухтăр патне телефонпа шăнкăравларăм, пулăшма ыйтрăм. Тухтăрпа медсестра ĕçкĕç патне васкавлăн чупса пымарĕç. «Ăна урăлтарасси медицина ĕçченĕн тивĕçĕ мар», – терĕç. Алкоголика эрех-сăра ĕçме пăрахтарасси хăш органăн тивĕçĕ-ши?

Начарланнăскере çийĕнчех пулăшу параймарăмăр. Юратьха, ветерансене пăрахса месерле яла каймарĕ. Икĕ-виçĕ кун вырăн çинче асапланса выртрĕ те тăваттăмĕшĕнче ура çине тăчĕ. «Турра мухтав! – сăмахлакаларĕç пенсионерсем. – Хура така сĕкни урама тухнă. Апла пурăнать...»

Ун пек çынсем ялта питĕ кирлĕ. Ура çинче тăрайми пуличчен куллен ĕçмен чух ветерансене ĕçлесе пама ўркенмеççĕ. Вĕсем – Мартынкассинче пурăнакансен 17%, ватăсене социаллă пулăшу кўрекен ушкăн, ял экономикинче пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна çирĕплетме – темиçе тĕслĕх. Кăçал ялти лавккаран киле тавар кўмешкĕн, çырмана йăмра хунавĕ йăтмашкăн, ветврач укол тунă самантра ĕне пăркаланасран тытса тăмашкăн çынран пулăшу ыйтма тиврĕ. Хам та, мăшăрăм та – сакăр вунă çула çывхарса пыратпăр, йывăр ĕçлейместпĕр. Пулăшакана тав тума хушнă. Йывăр ĕç мар пулин те тĕкĕ панăскере сăмса хĕреличчен эрех ĕçтертĕмĕр. Начар хăналасан тепрехинче алă тăсса памĕ.

Манăн çемье çеç мар, ялти ветерансем пурте хуçалăхра ăна-кăна тума хайхи ĕçченсенчен ыйтаççĕ. Вĕсем çĕр улми анине сухалама, паранкă лартма, вутă касса ваклама, курăк çулма, яла утă кўме, ытти вунвун ĕçе пурнăçлама пулăшаççĕ. Шурă эрех йўнĕ чухне лавккарипе çеç хăналанă. Вăл хакланнăранпа сăмакуншăн та кăмăллă.

Эпĕ социаллă пулăшава пĕртте хирĕç мар. Халсăрсене тĕкĕ панăшăн тав тăватăп çеç. Предприяти çук пирки ялта ĕçлеймеççĕ. Пенсионерсем тепĕр чух вăл е ку ĕçшĕн укçан татăлаççĕ. Эрехпе айкашмасан мăшăрĕсемпе ачисем те сивĕ куçпа пăхмĕччĕç. Шел, тепĕр чух ытларах ĕçеççĕ. Ку вара сывлăха пĕтерет.

■ **Вениамин АРХИПОВ.**
Элĕк районĕ

Суд залĕнчен

Ют килте ан хуçалан

Тăвай районĕн миравай судйи 36 çулти Владимир Алексеев тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерчĕ. Арçынна 8 уйăхлăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварма йышăнчĕ. Вăл ют килте пуçтахланнă.

Ўсĕр пулнă – тинĕс те чĕр куççи таран. Çĕрле хăй паллакан хĕрарăм патне кĕрес тенĕ. Карта урлă каçса картише иртнĕ, алăка вăрах шакканă. Кил хуçи уçман та – рамăна аркатма тытăннă. Хĕрарăмăн ирĕксĕрех алăка уçма тивнĕ. Хăйне малалла иртме чĕнмен пулин те Алексеев кил хуçине тĕртсе ярса пўрте кĕнĕ. Хĕрарăм ăна тухса кайма сĕннĕ, пуçтах çакна хăлхана чикмен кăна мар, хăраса ўкнĕскере мăшкăллассипе сехĕрлентернĕ.

Хĕрарăм пўртрен тарса тухнă, полиция шăнкăравланă. Пакунлисем килсе çитнĕ чух Алексеев диван çинче харлаттарсах çывăрнă ĕнтĕ. Анчах ку ăна яваплăхран хăтарман.

Судра Владимир хĕрарăма тивмен тесе тўрре тухма тăчĕ, ют çурта вара çывăрма кĕнĕмĕн: тулта сивĕ, киле кайма инçерех... Суд ăна маларах та преступлени тунине шута илсе айăпларĕ. Чăн та, условнăй майпа кăна. Тепĕр тесен Владимир халь пур пĕр касаматра ĕнтĕ – тепĕр преступленишĕн. Пĕлĕшĕпе пĕрле «фунфурик» ĕçнĕ те – хĕрарăмшăн хирĕçсе кайнă, арçынна вилмеллех хĕнесе пĕтернĕ. Следстви пырать.

■ **Оксана ЯСТРЕБОВА,**
Тăвай районĕн прокурорĕ

Следстви

Виле – йĕп мар...

Следстви комитечĕн Шупашкарти пайĕн производствинчи уголовлă çак ĕçсем иккĕшĕ те çын вилĕмĕпе çыхăннă. Иккĕшĕнче те айăплисем яваплăхран пăрăнас тĕллевпе çын виллине пытарма тăнă.

Пĕлтĕрхи авăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче çĕрле пулнă преступлени тĕлĕшпе следстви айăплав тăратнă ĕнтĕ. Тăватă çамрăк 55-ри арçын патне килне пынă. Вăл каччăсенчен пĕрин куккăшĕ умĕнче парăма кĕнĕ-мĕн – пĕтĕмпе те 50 тенкĕ кăна, анчах йĕкĕтсем шăпах çав укçана тавăрса пама сĕннĕ. Сăмахпа кăна хистемен – хĕнеме те ўркенмен. Арçынна урама илсе тухнă, çурт çывăхĕнчи сак çине лартса хăварнă, хăйсем пăрахса кайнă.

Кăштахран çамрăксем каялла таврăннă. Вĕсем хĕненĕ арçын вара сывламасть иккен – вилнĕ /экспертиза кайран вăл шăнса вилнине палăртнă/. Çамрăксем хăраса ўкнĕ. Хăйсене айăпласран шикленсе вилле арçыннăн хăйĕн картишне илсе кĕрсе унти шăтăка пăрахнă, рубероидпа витсе хăварнă.

Следстви 17 тата 19 çулсенчи виçĕ каччă тĕлĕшпе айăплав тăратнă. Тепри, 28 çулти, суд тенкелĕ çине лармĕ, вăл преступлени тунă хыççăн уйăх ытларах иртсен çакăнса вилнĕ.

Тепĕр тĕслĕхĕ кăçалхи ака уйăхĕн 4-мĕшĕнче çĕрле пулнă. Тĕп хулари Мир проспектĕнчи 76-мĕш çуртăн 8-мĕш хутĕнче подъездра 52-ри арçын виллине тупнă. Вĕлерни – куç кĕрет, кăкăрĕнчен çĕçĕпе чикнĕ. Сыщиксем айăплине часах тупнă. Кинологпа килнĕ те – йытă пакунлисене çак подъездăн 4-мĕш хутне ертсе çитернĕ. Преступник унта пурăннă иккен.

Мĕн пулса иртни халĕ уçăмлă ĕнтĕ. 23 çулти çамрăк хăйĕн хваттерĕнче хайхи арçынпа пĕрле эрех ĕçнĕ, хирĕçсе кайнă. Йĕкĕт хăнана çĕçĕпе темиçе хут чикнĕ – вилмеллех амантнă. Унтан вилле подъездра сĕтĕрсе тухнă, лифтпа 8-мĕш хута илсе хăпарнă та унта пăрахса хăварнă. Преступлени йĕрĕсене пытарас тĕллевпе 4-мĕш хутри юнпа вараланнă урайне çума та ўркенмен. Çук, пытарайман. Допросра вăл хăйĕн айăпне йышăннă.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

Кĕлкешсем илем тĕнчине çул хывнă

Вăрмар районĕнчи Кĕлкешри шкулта И.Я.Яковлев ячĕллĕ педуниверситетăн ўнерпе графика факультетĕнче вĕренекен студентсемпе вĕсен преподавателĕсен картинисен галерейи уçăлнă. Çак пулăма Культура çулталăкне халаллана.

Мероприятие И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕпе И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн преподавателĕсем, Вăрмар район администрацийĕн ĕçченĕсем, Кĕлкеш шкулĕнче вĕреннĕ, кăçал педуниверситетри ўнерпе графика факультетне пĕтерекен студентсем – пулас художниксем хутшăннă. Уявра ачасене пĕчĕкренех искусство тĕнчине юратма, хаклама вĕрентесси пирки сăмах пуçарнă. Сăрă ăстисен шухăшĕпе – «илем тĕнчене çăлма» пăрахман-ха. Тăван тăрăх илемне сăнама, курма пĕлекен усал ĕç тумастех. Çав вăхăтрах çынна çăкăр кăна мар, чун çимĕçĕ те кирлĕ. Илеме, культурăна, искусствăна юратма вара ачаранах пуçламалла. Çавăнпа галерейăна шкулта уçнин пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Кунти кашни картина – искусствăн пысăк тĕнчине çул хывни.

А.ГРОМОВА.

Паян «Сывлăх» хаçатăн çĕнĕ номерĕ пичетленсе тухрĕ

- **Сыпăсене пулăшасчĕ.**
- **Ирхи сывлăм тăрăх – çара уран.**
- **Хĕрен пăтти аван.**
- **Пăрça: типпи те, чĕрри те.**
- **Сиплевсем пĕр-пĕрне пуянлатаççĕ.**
- **Кишĕр çеçки çăмăллăх кўрет.**
- **Çăварта йўçек тутă тăрсан.**
- **Кофе – астмăна хирĕç.**
- **Ашшĕ-амăшне пулăшма – «Маттурскерĕм манăн» кăларăм.**
- **Çивĕчĕ пилĕк таран ўстĕр.**
- **Чикенрен – çĕр улми.**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерў
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пўлĕмре йышăнаççĕ.

ПРОДАЮ

31.Газобетонные БЛОКИ любых размеров, керамические поризованные блоки, утеплитель, облицовочный кирпич, силикатный кирпич. Доставка. Выгрузка. Т.: /8352/ 238115, 89170788115.

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

172.Гравмассу, керамблок, песок, **щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

369.Гравмассу, песок речной, карьерн., щебень. Т. 89520269954.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-не регистрациленĕ
“Хыпар” индексĕ – 54800,
“Хыпар”-шăмат кун” – 78353,
“Çамрăксен хаçачĕ” – 54804,
“Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515,
“Сывлăх” – 11524,
“Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.В.ГРИГОРЬЕВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренў пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерўсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРЎСЕНЕ 316-мĕш пўлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерўсен чăлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăçăр тўлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн **“Аталану сулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Сăмана таппи”, “Компетентлă”** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7481. Заказ 2032.